ЧĂВАШ АССРĕн ПĔРРЕМĔШ КОНСТИТУЦИЙĔ

Чăваш АССРĕн пĕрремĕш Конституцине 1926 çулхи январь уйăхĕнче, автономиллĕ облаçа Автономиллĕ Советлă Социализмлă Чăваш Республики туса хунă хыççăн, Чăваш АССРĕнчи Советсен пĕрремĕш съездĕнче йышăннă.

Чăваш автономиллĕ облаçĕн хăйĕн конституцийĕ пулман. Хăйĕн шалти ĕçĕсене вăл, РСФСР Конституцийĕпе килĕштерсе, самоуправлени йĕркипе туса пынă, унăн государство влаçĕн наци органĕсем — автономиллĕ облаçри ĕççынни депутачĕсен Совечĕ тата унăн ĕçтăвкомĕ пулнă.

Автономиллĕ Чăваш облаçне йĕркелени тата каярахпа ăна Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республика туса хуни, унăн пĕтĕм историйĕ Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ленинла наци политикине яланах шанчăклăн пурнăçа кĕртсе пынине яр-уççăн кăтартса паракан тĕслĕх пулса тăрать. «Октябрьти Социализмлă Аслă революци çĕнтĕрни социаллă пурнăçпа экономика енĕпе тĕпренех пысăк улшăнусем тумалли, наци ыйтăвĕпе ленинла программăна пурнăçа кĕртмелли, совет республикисене туса хумалли политикăлла тĕп услови пулса тăчĕ»,—тенĕ КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне туса хунăранпа 50 çул çитнине кĕтсе илме хатĕрленесси çинчен» йышăннă Постановленире.

Тĕнчери чи демократиллĕ государствăна — нумай нациллĕ Совет государствине туса хумалли принципсене хатĕрленĕ чухне В. И. Ленин пусмăрта пурăннă нацисемпе халăхсен хăйсен наци государственноçне тăвас кăмăл пулнине, вĕсем ирĕке тухнă ытти халăхсемпе пĕр тан пулса федеративлă пĕрлешӳре интернационалла сывăхланма тăрăшнине шута илнĕ. Çавăн пек шухăшкăмăла В. И. Ленин пролетариат диктатури вăхăтĕнче пĕтĕмпех вырăнлă тесе, вăл историн объективлă процесĕ тесе, общество аталанăвĕнчи прогрессивлă туртăм тесе шутланă. Социализм та, Советсем те хăйсен тупсăмĕ енченех интернационаллă, анчах аталанасса социализм нациллĕ государство формипе аталанать.

Совет влаçĕ малтанхи кунсенчех В. И. Ленин туса хатĕрленĕ наци программине пурнăçа кĕртме тытăннă. Пĕтĕм Российăри Советсен III съезчĕ йышăннă документра — «Ĕçлекен тата пусмăр тӳсекен халăх прависен Декларацийĕнче» çапла çырса хунă: «Советлă Россия республикине ирĕклĕ нацисен ирĕклĕ союзĕн никĕсĕ çинче, нациллĕ совет республикисен федерацийĕ туса йĕркелеççĕ».

Пĕрремĕш Совет Конституцийĕ — РСФСР Конституцине 1918 çулхи июнь уйăхĕнче Советсен V съездĕнче йышăннă. Унта «Ĕçлекен тата пусмăр тӳсекен халăх прависен Декларацийĕ» пĕтĕмпех кĕнĕ. Декларацири шухăша аталантарса, Конституцин 11-мĕш статйинче çапла çырса хунă: «Уйрăм йышши йăла-йĕркепе тата наци составĕпе палăрса тăракан облаçсен Совечĕсем автономиллĕ облаçсен союзĕсене пĕрлешме пултараççĕ... Çав автономиллĕ облаçсен союзĕсем федераци йĕркипе Россия Социализмлă Федеративлă Совет Республикине кĕреççĕ». Çапла вара, Ленин идейи — чи демократиллĕ, нумай нациллĕ социализмлă государство тăвас шухăш — государство законĕнче вăя кĕнĕ. Халăхсене интернационалла пĕтĕçтерес ĕçре вăл питĕ пысăк вырăн йышăннă.

РСФСР Конституцийĕн тĕп положенийĕсенче — пролетариат диктатури çинчен, Совет влаçĕн задачисем çинчен, унăн органĕсен структури çинчен, суйлав прави, совет гражданĕсен прависемпе тивĕçĕсем çинчен тата ытти ыйтусем çинчен калакан вырăнсем халăхсен пĕртанлăхĕпе тăванлăхне, интернационализм идейисене, социализм тăвас шухăшсене палăртса тăраççĕ. РСФСРăн пĕрремĕш Конституцийĕ ытти союзлă республикăсемпе автономиллĕ республикăсен Конституцийĕсене, çав шутра Чăваш АССРĕн Конституцине хатĕрлеме те паха тĕслĕх пулса тăнă.

Автономиллĕ Чăваш облаçне Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республика туса хурас умĕнхи, республикăн пĕрремĕш Конституцине йышăнас умĕнхи çулсенче çĕршывра Совет влаçне çирĕплетессишĕн кĕрешнĕ, граждан вăрçи пынă, 1921 çулхи выçлăх кӳнĕ йывăрлăхсене пĕтерессишĕн кĕрешӳ пынă, халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн, культурăна аталантарассишĕн çине тăрса ĕçленĕ. Çав çулсенче автономиллĕ Чăваш облаçĕнче хуçалăх ĕçĕнче пулнă пысăк йывăрлăхсене, облаçри парторганизаци ертсе пырас ĕçре пулнă ситменлĕхсене ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви пулăшнипе, тăванла халăхсем, пуринчен малтан аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе çĕнтерне.

1925 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче Пĕтĕм Россия Тĕпĕçтăвкомĕ (ВЦИК) автономиллĕ Чăваш облаçне Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики туса хурасси çинчен Постановлени йышăннă.

Çавăн чухнех «Автономиллĕ Чăваш ССР чиккисене пысăклатасси çинчен» ыйту пăхса тухнă, ку ыйтупа 1925 çулхи июнĕн 20-мĕшĕнче ВЦИК Постановлени йышăннă. Çав постановлени тăрăх, Чăваш АССР территорине Улатăр уезчĕн пĕр пайне, çав шутра—Улатăр хулине, Улатăр, Кувакино тата Пăрачкав вулăсĕсене кĕртнĕ.

Улатăрта 14 пысăк предприяти пулнă. Çак хулана Чăваш АССРне кĕртни республика экономикине чылай пуянлатнă; рабочи класс йышĕ виçĕ хута яхăн ӳснĕ, облаçри парторганизацире коммунистсен хисепĕ тата вĕсем хушшинчи рабочисен тӳпи икĕ хут ӳснĕ. республикăри ĕççынни массисене пролетариат енчен витĕм кӳме лайăхрах майсем пулса тăнă. Çапла вара, Улатăр уездне Чăваш АССРĕпе пĕрлештерни экономика енчен сеç мар, политика енчен те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă.

Автономиллĕ облаçран автономиллĕ республика туса хуни чăваш халăхĕн демократиллĕ прависене тата ытларах пысăклатнă. Коммунистсен партийĕ халăхсен шухăш-кăмăлне тимлĕн шута илнине кăтартса панă.

Чăваш АССР Конституцийĕ — государствăн тĕп законĕ — государство пурнăçĕн пур енĕсенче те анлă правасем парать. Конституци тăрăх, Чăваш АССРĕ государство влаçне автономи йĕркипе пурнăçа кĕртсе пырать, унăн закон кăларакан тата ĕç тăвакан влаçăн аслă органĕсем пур.

Чăваш АССР Конституцийĕ, обществăпа государство стройĕн пĕтĕмĕшле принципĕсене çирĕплетнисĕр пусне, Чăваш АССРĕн хăйне евĕрлĕ наци уйрăмлăхĕсене те шута илет.

Конституцин малтанхи пайĕ «Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикине туса хурасси çинчен калакан Декларацирен» тăрать. Унта чăваш халăхĕ «хăйĕн экономикăлла тата нациллĕ никама пăхăнманлăхĕшĕн, хăйĕн культуришĕн, йăлишĕн тата хăйĕн чĕлхишĕн ытти нацисен, пуринчен малтан вырăс халăхĕн тивлетсĕр хăварнă çыннисемпе пĕрле, пĕр тăшмана — эксплуататорсемпе пусмăрçăсене хирĕç» пĕрле çине тăрса кĕрешнин историне кĕскен çырса кăтартнă.

Ун хыççăн çакна палăртса хăварнă: вырăс халăхĕ патша влаçне хирĕç, çĕр улпучĕсемпе капиталистсене хирĕç революциллĕ кĕрешĕве çĕкленнĕ чухне кашни хутĕнчех чăвашсем çав кĕрешĕве хутшăннă, вĕсем Степан Разинпа Емельян Пугачев ертсе пынă хресчен вăрçисенче çапăçнă, 1905 çулхи революцие, 1917 çулта влаçа рабочисемпе хресченсен аллине илессишĕн пынă кĕрешĕве хастар хутшăннă. Октябрьти Социализмлă Аслă революци кăна Российăри ытти халăхсемпе пĕрле чăваш халăхне те помещиксемпе капиталистсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă.

Декларацире çапла каланă: Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики туса хурса, чăваш ĕççыннисем малашне те хăйсене Советлă социализмлă республикăсенчи ĕççыннисен аслă çемйин уйрăлми пайĕ тесе шутлаççĕ, коммунизм çулĕ çине тăнă халăхсен пĕрлехи пролетариллĕ çемйипе пĕрлешмешкĕн чăваш халăхĕн политикăпа культура тĕлĕшĕнчи шайне ӳстерессине хăйсен тĕп задачи теççĕ.

Конституцин пĕрремĕш полосыпăкĕ «Пĕтĕмĕшле положенисем» ятлă. Унта государство тытăмĕн формисене, унăн тĕллевĕсемпе чи кирлĕ задачисене кăтартса панă. «Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики рабочисемпе хресченсен социализмлă государстви пулса тăрать, вăл Россия Советлă Социализмлă Федеративлă Республикине ирĕклĕ тата хăйĕн кăмăлĕпе, федерации йĕркипе кĕрет... Республикăри пĕтĕм власть рабочисен, хресченсен тата хĕрлĕ армеецсен депутачĕсен

Совечĕсен аллинче тăрать», — тенĕ Конституцире.

Государство ĕçĕнчи чи пысăк ыйтусене — Конституцие йышăнас, унта хушусемпе улшăнусем кĕртес, республика чиккисене палăртас, административлă пайланăва çирĕплетес, республика халăх хуçалăхне аталантармалли плана тата бюджета пăхса тухса çирĕплетес, çав планпа бюджета мĕнле пурнăçланине кăтартса паракан отчета çирĕплетес, АССР законĕсене йышăнас ыйтусене пурне те государство влаçĕн аслă органĕсем пăхса татса парассĕ. Республикăн аслă органĕсем ССР Союзĕпе РСФСР законĕсене шанчăклăн пурнăçа кĕртсе пырассĕ, çĕрпе, вăрмансемпе, шыв ресурсĕсемпе тĕрĕс усă курнине, ССР Союзĕпе РСФСРăн центрти органĕсене пăхăнса тăракан предприятисен ĕçне тĕрĕслесе тăрассĕ. Республикăри государство влаçĕн аслă органĕсем государство йĕркелĕхне тата граждансен прависене сыхлассĕ, суд органĕсене туса хурассĕ, вырăнти промышленноçа, пурăнмалли çурт-йĕр лартас ĕçе, коммуналлă хуçалăха, сывлăха сыхлас, халăха вĕрентес ĕçе, социаллă пулăшу ĕçне ертсе пырассĕ, хуçалăхпа культура ĕçĕнчи ытти ыйтусене татса парассĕ.

1926 çулта йышăннă Конституци тăрăх, государство влаçĕн чи аслă органĕсем çаксем пулнă: республикăри Советсен съезчĕ, съездпа съезд хушшинче — съезд суйланă Тĕпĕçтăвком (ЦИК). Тĕпĕçтăвком Конституцие кăна улăштарма пултарайман, ытти ыйтусене вăл съездпа съезд хушшинче пурне те татса панă. Тĕпĕçтăвком сессийĕсем хушшинче кулленхи ĕçсене туса пыма Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумне суйланă.

Тĕпĕçтăвком Халăх Комиссарĕсен Советне — ĕç тăвакан тата хушакан аслă органа суйланă. Халăх хуçалăхĕпе культура ĕçĕн тĕрлĕ енĕсене куллен ертсе пыма халăх комиссариачĕсем туса хунă.

Чăваш АССРĕн пĕрремĕш Конституцине РСФСРăн пĕрремĕш Конституцийĕпе килĕштерсе çырса хатĕрленĕ. Унта республика Совет влаçĕ вăхăтĕнче тата автономиллĕ область пулнă вăхăтра политикăпа хуçалăх тата культура енĕпе тунă çитĕнӳсене палăртса хăварнă. Конституцире пролетариат диктатурин идейисем, экономикăна социализмла çĕнетсе улăштармалли, чăваш халăхĕн культурине аталантармалли идейăсем ярăççăн палăрса тăрассĕ. Конституци çав вăхăтра пулнă эксплуататорла элементсене — нэпмансене, кулаксене тата ĕçлемесĕр тупнă тупăшпа, çын ĕнси çинче пурăнакансене суйлав прави паман. «Ĕçлев, — тенĕ Конституцире, — республика гражданĕсемшĕн пуриншĕн те тивĕç пулса тăрать». Çавăн пекех рабочисемпе хресченсен Аслă революцийĕ панă тивлете сыхлассине тата ССР Союзне хӳтĕлессине те мĕнпур граждансен тивĕçĕ тенĕ.

Конституцире халăхсен пĕртанлăхĕн ленинла идейине уççăн палăртса хăварна. Граждансен прависем пĕр тан пулнине асра тытса, тенĕ унта, Чăваш АССРĕ, çав граждансем мĕнле расăпа мĕнле наци çыннисем пулнине пăхмасăр, çапла пĕлтерет: сахал йышлă наци çыннисене кирек мĕнле пусмарлани е вĕсен пĕртанлăхне хĕсни республикăн тĕп законĕсемпе пачах та килĕшсе тăмасть.

Чăваш çĕршывĕнчи ĕççыннисен, уйрăмах хĕрарăмсен, политикăллă активлăхне вăйлатас ĕçре государствăпа общество учрежденийĕсенче тата организацисенче пур çĕрте те чăваш чĕлхипе усă курма май пани пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Анчах çав йĕрке республикăра пурăнакан ытти халăх çыннисен чĕлхисене ним чухлĕ те хĕсмен, халĕ те хĕсмест. Конституци çав çынсене шкулта хăйсен тăван чĕлхипе вĕренме, çавăн пекех государствăпа общество учрежденийĕсемпе организацийĕсенче хăйсен тăван чĕлхипе ирĕклĕ каласма право панă. Тĕрлĕ наци çыннисене панă çак правăпа государство учрежденийĕсенче, суд органĕсенче, шкулсенче, çавăн пекех государство учрежденийĕсенче ĕçлекенсем халăх хушшинче каласнă чухне яланах çирĕп пурнăçласа пынă. Ĕççыннисем çак йĕркене Ленин халалĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыракан йĕрке тесе хакланă. Çак политика тĕрĕс пулнине пурнăç çирĕплетсе пачĕ.

Чăваш АССРĕн Конституцийĕнчи (тĕп законĕнчи) тĕп положенисем пурте ленинла наци политикинчен тухса тăнă, вĕсен тĕллевĕ социализмла революци çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлесси, пролетариат диктатурине тата Совет Союзĕнчи халăхсен интернационалла туслăхне çирĕплетесси пулнă.

Чăваш АССРĕн пĕрремĕш Конституцийĕнче вырăнти наци уйрăмлăхĕсене те, нумай нациллĕ Совет государствине демократиллĕ централизм принципĕсем тăрăх йĕркелемелли пĕрлехи никĕсе те палăртса хăварнă. Çавăнпа унта СССР Конституцийĕпе, РСФСР тата автономиллĕ республикăсен Конституцийĕсемпе пĕрешкел уйрăмлăхсем пур. Çав уйрăмлăхсем Совет Союзĕн экономикăпа политикăри тата идеологири аталанăвĕн никĕсĕсем пĕрлĕхлĕ пулнăран, государство влаçĕ тата коммунизм строительствин задачисем пĕрлĕхлĕ пулнăран килнĕ.

Пĕрремĕш Совет Конституцийĕн тупсăмĕ çинчен ăнлантарса панă май В. И. Ленин 1918 çулта çапла каланă: «Халиччен пулнă конституцисем пурте пуçпулса таракан классен интересĕсене хӳтĕленĕ. Совет Конституцийĕ кăна ĕççыннисемшĕн тăрăшать, ӳлĕмрен те яланах вĕсемшĕн тăрăшĕ, вăл социализм тăвассишĕн пыракан кĕрешӳре хăватлă хатĕр пулса тăрать». (Мĕнпур сочиненисен пуххи, 36 т., 535 стр.). Чăваш АССР Конституцийĕн тупсăмне те аслă çулпуççăн çак сăмахĕсенче пĕтĕмпех курма пулать.

Автономиллĕ облаçран автономиллĕ республикăна куçни чăваш халăхĕн историйĕнче питех те пысăк политикăллă ĕç пулнă. Вăл чăваш халăхĕн наци государствине туса хунине пĕлтернĕ. Вăл çавăнпа пĕрлех Чăваш çĕршывĕнчи ĕççыннисемшĕн советлă социализмлă демократие пысăклатнă, социализмшăн пыракан кĕрешӳре вĕсен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне вăйлатма пулăшнă.

Анчах, партин XII съезчĕ йышăннă решенисенче каланă пек каласан, «Нацисен право тĕлĕшĕнчи пĕртанлăхĕ — Октябрьти революци кӳнĕ пĕртанлăх вăл — халăхсен аслă çĕнтерĕвĕ, анчах вăл хăй тĕллĕнех наци ыйтăвне пĕтĕмпех татса параймасть-ха». Коммунистсен партийĕ, хăйĕн X тата XII съезчĕсем йышăннă решенисене пурнăçласа, наци республикисен экономикипе культурине аталантарма, халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсем валли кадрсем вĕрентсе хатĕрлеме, Советсене çирĕплетме, вĕсене халăх сывăхнерех тăратма, анлă массăсен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне вăйлатма питĕ нумай ĕçсем тунă.

Наци республикисене, çав шутра Чăваш АССРне те, ĕлĕк кая юлнине пĕтерме пулăшас ĕçре индустриализаци, ялхуçалăхне коллективизацилени тата культура революцийĕ тĕп вырăн йышăннă. Республикăна социализмла çĕнетсе улăштарас задачăна партин Центральнăй Комитечĕпе облаçри парторганизаци ертсе пынипе хаяр класс кĕрешĕвĕнче — капитализмла элементсене, кулаксене, буржуалла националистсене хирĕç, çавăн пекех облаçри парторганизацири сылтăм оппортунистла тата национал сулăнчăкла парăмсене хирĕç пынă кĕрешӳре татса панă.

Аслă вырăс халăхĕпе Совет Союзĕнчи ытти халăхсем пулăшнипе малтанхи пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче пĕтĕм çĕршывра, çав шутра Чăваш АССРĕнче те, социаллă-экономикăллă пурнăçра çав тери пысăк улшăнусем пулса иртнĕ. 1937 çул тĕлне хуçалăхăн социализмлă форми тĕп вырăн йышăнса тăнă. Пĕтĕм халăх хуçалăхĕ туса паракан продукци шутĕнче социализм секторĕн тӳпи 95,6 процента çитнĕ. 1913 çулхипе танлаштарсан, промышленность 7,2 хут нумайрах продукци туса кăларма пуçланă. Рабочисен йышĕ питĕ нумай ӳснĕ. Çĕнĕ хуласемпе поселоксем тăва-тăва лартнă. Хресчен хуçалăхĕсен 80 проценчĕ ытла колхозсене пĕрлешнĕ, тырпул акса тăвакан çĕр лаптăкĕн 95 проценчĕ вĕсен аллинче пулнă. Эксплуататорла классене пĕтернĕ. Культура революцийĕ пулса иртнĕ, çитĕннĕ çынсен 95 проценчĕ хут пĕлекен пулнă, пурне те 7 çул вĕрентес йĕрке çине куçма пуçланă. Совет интеллигенцийĕн кадрĕсем йышлăн ӳссе çитĕннĕ. Облаçри парторганизаци йышĕ ӳснĕ, вăл ĕççыннисен анлă массисене вăйлăрах витĕм кӳме пуçланă.

Социаллă пурнăçпа экономикăна тĕпренех çĕнетсе улăштарнипе, культура революцийĕ пулса иртнипе чăваш халăхĕ социализмлă наци пулса тăнă. 1937 çулта Чăваш АССРĕ çĕнĕ Конституци — социализм çĕнтернине палăртса тăракан Конституцие йышăннă.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, ССР Союзĕнчи халăхсен тăванла çемйинче, Советлă Чăваш çĕршывĕ чечекленекен республикăсенчен пĕри пулса тăчĕ. Чăваш АССРĕнчи ĕççыннисем Конституци кунне хамăрăн аслă социализмлă Тăван çĕршывшăн чĕререн савăнса паллă тăваççĕ, Совет Союзĕнчи халăхсен пĕрлĕхĕпе тăванла туслăхĕн чаплă уявне — ССР Союзне туса хунăранпа 50 çул çитнине кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, политикăллă активлăхпа ĕçри хастарлăха вăйлатнăçемĕн вăйлатса пыраççĕ.

Т. АХАЗОВ.